Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

14-15 (7654-7655) №№ ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи февралĕн (нарăс) 21-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Февралĕн 23-мĕшĕ – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ**

## Саламлатăп аттене, саламлатăп пиччене!

Манăн аттене Николай Николаевич Мазиков тесе чĕнеççĕ. Вăл Москакасси çывăхĕнче вырнаçнă «Сеспель» заводра станок умĕнче ĕçлет. Унăн ĕçĕ çăмăл мар: кунĕпех ура çинче. Епле йывăр пулсан та, атте пирĕнпе шăкăл-шăкăл калаçса ларма вăхăт тупать, пире тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерме тăрăшать.

Манăн пичче Владимир вара Çар службинче тăрать, хăйĕн çĕр-шыв умĕнчи тивĕçне пурнăçлать. Çитсе килекен уяв ячĕпе аттепе пиччене чун-чĕререн ăшă сăмахсем каласшăн. Эпир вăл салтакран таврăнасса чăтăмсăррăн кĕтетпĕр.

Саламлатăп аттене
Совет Çарĕн кунĕпе,
Пире пăхса савăнма,
Нумай-нумай пурăнма.
Саламлатăп пиччене,
Эп мухтатăп ун ĕçне.

**Эдуард МАЗИКОВ,**
**Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи**
**7 «б» класра вĕренекен.**



*«Шкул пĕтерсен ăçта каятăн?» – тесе ыйтсан, Шомикри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта аслăрах классенче вĕреннĕ чухнех Владимир Ямангеевăн (сăн ӳкерчĕкре) пĕр хуравччĕ: «Салтак каятăп». Арçыннăн çак тивĕçне пурнăçлама вăл ачаранах хатĕрленчĕ, спортпа туслашрĕ, кĕнекесем вуларĕ. Йĕлтĕрпе класра ыттисенчен вăйлăрах чупаканскере кĕçех шкулшăн ăмăртма район шайне илсе тухма пуçларĕç. Хăйĕн умне çивĕч тĕллев лартнă каччă кунта та кайрисен ретĕнче пулса питне хĕретмерĕ. 9 класс хыççăн мал туртăмлă яш строительсен техникумне вĕренме кĕчĕ, анчах спортран пăрăнмарĕ. Çавăнпа та иртнĕ çул техникум пĕтерсе алла специальноç илнĕ çирĕп кăмăллă каччă пĕлĕве ӳстерме Мускаври патшалăх университечĕн Шупашкарти филиалне вĕренме кĕчĕ. Кĕчĕ те, çара кайма ят тухсан, çăмăллăх шыраса салтакран пăрăнма тăрăшмарĕ.*

*Ачаран спортпа туслашнă Володя иртнĕ çулхи раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнченпе Сывлăш-çар вăйĕсен Çĕнĕ Шупашкарти тĕп спорт клубĕнче службăра тăрать. Нумаях пулмасть вăл алла автомат илсе çĕр-шыв умĕнче присяга тытрĕ. Вăл тупа тунине ашшĕ-амăшĕ курса тăни те çамрăк салтака службăра тĕллевлĕрех те çирĕпрех пулма хистемелле. Çакăн пек салтаксем çĕр-шыв хуралĕнче тăнă чухне мирлĕ граждансем лăпкă çывăрма пултарĕç тесе шутлатăп, кун пирки иккĕленместĕп.*

***А. БЕЛОВ.***

**Раççей Çарĕн хисеплĕ воинĕсем, рядовойсемпе запасри офицерсем, Аслă Отечественнăй вăрçă тата Хĕç-пăшаллă вăйсен ветеранĕсем!**

Сире Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ – паттăр, çирĕп чунлă çынсен уявĕ ячĕпе саламлатăп!

Хăвăр тивĕçе чыслăн пурнăçланипе, паттăр пулнипе тата çĕр-шыва юратнипе эсир патшалăха тĕрлĕрен хăрушлăхран, тапăнасран сыхласа тăратăр, çĕр-шывра, тăван Чăваш Енре тăнăçлăха тивĕçтеретĕр. Çапăçусен хирĕсенче пулнисене, паян çар вахтинче тăракансене е Раççей Çарĕн ретне тăма хатĕрлекенсене тав сăмахĕ калатпăр.

Пирĕн республикăра аттесемпе асаттесен традицийĕсене манмаççĕ, ăрусем хушшинчи çыхăну татăлмасть. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш çĕрĕ çинче оборонăллă-массăллă ĕçсен Пĕтĕм Раççейри уйăхлăхĕ старт илчĕ. Вăл çамрăксене патриотла воспитани парассине лайăхлатма, пулас воинсене çар ретĕнче пулма хатĕрлеме тивĕç.

Чăн-чăн арçын яланах кил вучахне сыхлать, çывăх çынсен лăпкăлăхĕпе тăнăçлăхне упрама тăрăшать. Çакна валли питĕ çине тăни тата çирĕплĕх кирлĕ. Çак уяв кунĕнче кашни килтех хăйĕн килĕн тата çĕр-шывăн чăннипех те хӳтĕлевçи пулса тăнисем тĕлĕшпе тав сăмахĕсем калаччăр.

Çирĕп сывлăх, кăмăл çирĕплĕхĕ, ăнăçусем, тăнăçлăх, телей тата юрату сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**Хаклă ентешсем! Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, вăрçăн йывăр çулĕсене чăтса иртнĕ тыл ĕçченĕсем, воин-интернационалистсем, тĕрлĕ вăхăтра çар çыннин тивĕçĕсене пурнăçланисем тата çара кайма хатĕрленекен çамрăксем!**

Сире пурне те пĕтĕм халăх уявĕпе – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çĕр-шыва хӳтĕлесси пирĕн çĕр-шыври кашни çыншăн чыслă та хисеплĕ тивĕç. Çарта службăра тăратпăр е мирлĕ ĕçре вăй хуратпăр – пурте эпир Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисем пулса тăратпăр. Аслă Отечественнăй вăрçăра çĕнтерӳ тунă ветерансемпе тыл ĕçченĕсем умĕнче çĕре çити пуç таятпăр, вĕсене паттăрлăхĕпе хăюлăхĕшĕн, пире телейлĕ пурнăç парнеленĕшĕн чĕререн тав тăватпăр. Çитĕнекен ăру вĕсенчен тĕслĕх илсе ӳсет. Вĕри точкăсенче пирĕн салтаксем çĕр-шыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçларĕç. Тавах паттăр ывăлсем çитĕнтернĕ салтак амăшĕсене.

Малашне те çĕр-шыв тĕрекĕ пирĕнтен кашнинчен килнине асра тытса ĕçлесчĕ, район, республика, Раççей çирĕплĕхĕшĕн тимлесчĕ. Кăçал, Çамрăксен тата Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче, хамăр ачасене аслă ăрури паттăр салтаксен ырă тĕслĕхне тĕпе хурса воспитани парасчĕ, вĕсене тăван çĕре, Тăван çĕр-шыва юратма хăнăхтарса ӳстересчĕ.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳпе юрату, тату пурнăç, вăрăм кун-çул, телей сунатăп.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

**Аслă Отечественнăй вăрçăн, Хĕç-пăшаллă Вăйсен хисеплĕ ветеранĕсем, воин-интернационалистсем, Çурçĕр Кавказри контртеррористла операцие хутшăннисем, Тăван çĕр-шывăн пулас хӳтĕлевçисем!**

Сире Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе саламлатăп! Ку вăл хăюллă çынсен, чăн-чăн патриотсен уявĕ. Пĕтĕм истори тапхăрĕнче Хĕç-пăшаллă вăйсем çĕр-шыв хуралĕнче пулнă.

Пирĕн çар яланах халăх çарĕ пулнă, халĕ те ку çапла.

Аслă Отечественнăй вăрçăна районтан 9845 çын тухса кайнă, 4354 çын кăна каялла таврăннă. 5 çын Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ. Вăрçа хутшăннисем хушшинче хĕрарăмсем те çук мар.

Афганистан Республикинче пирĕн 144 ентеш интернационалла тивĕçе пурнăçларĕ. Чылайăшĕ патшалăх наградисене тивĕçрĕ. Шел пулин те, вĕсенчен çиччĕшĕ чĕррĕн таврăнаймарĕ. 321 ентеш хĕрӳ точкăсене тата хĕç-пăшаллă конфликтсене хутшăнчĕ. Вĕсенче Муркаш çĕрĕ хăйĕн 4 ывăлне çухатрĕ.

Çĕр-шывăн паянхи хӳтĕлевçисем те çарпа флот ветеранĕсен тивĕçлĕ смени пулма тăрăшаççĕ. Халăхпа çар яланах пĕрле пулнă. Ку традицисем малалла тăсăлаççĕ. Çавăн тĕслĕхĕ – Çурçĕр Кавказра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Е.Г. Борисов Раççей Геройĕн ятне тивĕçни.

Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ – РФ патшалăх уявĕ. Çакă вăл Тăван çĕр-шыва алла хĕç-пăшал тытса шанчăклă хӳтĕленин пĕлтерĕшне шута хуни. Апла пулсан малашне те пирĕн çĕр-шывăн оборона хăвачĕ тивĕçлĕ шайра пулĕ.

Сире чĕререн ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатăп.

**А. ПРОКОПЬЕВ, Муркаш тата Элĕк районĕсемпе çар комиссарĕ.**

**Çавăн пекех Муркаш район çыннисене, ентешсене Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей Геройĕ, летчик-космонавт Н.М. БУДАРИН, Приволжски-Урал çар округĕн командующийĕ, генерал-лейтенант А.В. БАХИН саламлаççĕ.**

**«Çĕр улми – 2009»**

# Чăваш Ен – çĕр улми çĕр-шывĕ

Нарăс уйăхĕн 19 – 20-мĕшĕсенче Шупашкарта «Çĕр улми – 2009» отрасль выставки тата «Çĕр улми туса илес ĕçри инновациллĕ малашлăх» наукăпа практика конференцийĕ ĕçлерĕ. Выставка уçăлнă çĕрте ЧР Президенчĕ Николай Федоров пулчĕ. Палăртма кăмăллă, выставкăра Раççейри 14 регионпа чикĕлеш енчи 5 çĕр-шыв представителĕсем пулни çак форумăн пĕлтерĕшĕ анлă пулнине çирĕплетет çеç.

– Эпир çакăнта паян ял çыннисем çĕр улмине юратса тата конкуренцире малалла пăхса ӳстернине куратпăр. Паян выставкăра пурри тепĕр 1-1,5 çултан республикипех сарăласси пирки иккĕленӳ çук. Чăваш çĕр улмийĕ малашлăха шанчăклă пăхнине куратпăр та çак ĕç темĕнле кризислă тапхăрта та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатмасса шанатпăр. Çак культурăна тата унпа çыхăннă бизнеса аталантарасси мал ĕмĕтлĕ. Ăна çул парассипе тăрăшасси – пирĕн тĕллев, – терĕ выставкăна уçнă çĕрте сăмах каланă май чăваш çĕр улмине нумай вăхăтлăха Раççей тĕп хулине парса тăма Мускав мэрĕпе Ю. Лужковпа килĕшӳ тунине палăртса ЧР Президенчĕ Н. Федоров.

Çак выставкăран пирĕн районти çĕр ĕçченĕсем те юлмарĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев çапла каласа пачĕ:

– Çак пĕлтерĕшлĕ выставкăран пирĕн район та айккинче юлма пултараймарĕ. «Иккĕмĕш çăкăр» туса илесси – пирĕн районăн тĕп тивĕçĕсенчен пĕри. Çакна шута хурса выставкăна пирĕн патăмăртан 8 хуçалăх хутшăнма кăмăл турĕ. Вĕсем: «Ударник», «Свобода», «Герой», «Оринино», Ильич яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе Бархаткинпа Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсем. Çак выставка ЧР Президенчĕн Н. Федоровăн «Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ çинчен» Указне пурнăçласа çулталăкра пĕр миллион тоннăран кая мар çĕр улми туса илессине пурнăçа кĕртме пулăшмалла.

**А. ПЕТРОВ.**



**Сăн ӳкерчĕкре: пирĕн район представителĕсем те выставкăра.**

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

# Ыйтусем те пулчĕç

Иртнĕ юн кун республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн района Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ В.П. Мидуков тата аслă пĕлӳ паракан «Чăваш ял хуçалăх академийĕ» федераллă патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕн ректорĕ Н.К. Кириллов килчĕç. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю. А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене районăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Унтан, икĕ ушкăна пайланса, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç.

В.П. Мидуков район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕпе, районти тĕп больницăн тĕп врачĕпе В.Г.Даниловпа пĕрле чи малтанах Ильинка ял тăрăхĕнче пулчĕ. Кунта вĕсем Ильинкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул коллективĕпе тĕл пулчĕç. Владимир Петрович хăйĕн сăмахĕнче республикăн социаллă-экономика аталанăвĕ çинче чарăнчĕ. Вăл çакна палăртрĕ. Пĕтĕм тĕнчери кризис республикăна та тĕкĕнмесĕр иртмерĕ. Çавна май Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2009 çулхи бюджета çĕнĕрен пăхса тухрĕ. Анчах та бюджет сферине уйăрнă укçатенкĕне чакарман, çав шайрах хăварнă. Çавăн пекех уйрăм категорисем илсе тăракан çăмăллăхсем валли пăхнă суммăна та тĕкĕнмен, тĕрлĕрен çăмăллатнă патшалăх программисем те малтанхи пекех юлаççĕ.

Ĕççĕр тăрса юлнисене пулăшма кăçал РФ бюджетĕнчен 500 млн. тенкĕ укçа килмелле республикăна. Çав суммăна çĕнĕ ĕç вырăнĕсем тунă, ĕççĕррисене çĕнĕ професси панă, ĕççĕр юлнисене тӳлемелли пособине панă çĕре яраççĕ.

Кăçал Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ пулнă май ял хуçалăхне паракан малтанхи пулăшусене те сыхласах хăварнă.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов палăртнă тăрăх, çак çăмăллăха иртнĕ çул районти ял хуçалăх предприятийĕсемпе уйрăм çынсем килти хушма хуçалăха аталантарма 77 млн. тенкĕлĕх илнĕ. Кризиса пăхмасăр, районти бюджета, социаллă сферăна тытса тăмалли укçа-тенкĕне те малтан пăхнă чухлех хăварчĕç депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче.

Тĕл пулура сывлăха сыхлассипе ыйтусем пулчĕç. Вĕсем çине Владислав Григорьевич тулли хуравсем пачĕ.

– **Мĕншĕн больницăра выртнă чух хăш-пĕр эмелсене чирлисене хăйсене илтереççĕ?**

– Тухтăрсем вăл е ку чире сиплеме пăхнă пур эмелсене те çырса параççĕ. Вĕсем тӳлевсĕр. Енчен те çавăнпа пĕрлех витаминсемпе е ытти урăх эмелсемпе сипленес тесен вара вĕсене чирлисем хăйсем илнĕ тĕслĕхсем пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем çав чирпе сиплемелли эмелсен прейскурантĕнче çук.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**